# Сошествіе
# Святаго Духа
## НА АПОСТОЛОВЪ.

(Троица).

На чувашскомъ языкѣ.

Изданіе Православнаго Миссіонерскаго Общества.

№ 106.

КАЗАНЬ.
Центральная типографія.
1913.

Отъ Переводческой Коммиссіи Православнаго Миссіонерскаго Общества печатать разрѣшается. Казань. 21 марта 1913 года.

Предсѣдатель Переводческой Коммиссіи, профессоръ Императорской Казанской Духовной Академіи **М. Машановъ**.



## АЛЛӐМӖШ КУН ПРАҪНИКӖНҪЕ ВӖРЕНТСЕ КАЛАНИ.

Іисус Христос вилӗмрен ҫӗрӗлсе тӑрсан кайран ҫӗр ҫинҫе 40 кун пурӑннӑ. Вӑл ҫынсене курӑнми ҫӳренӗ, тапхӑр, тапхӑр Хӑйӗн вӗренекенӗсене анҫах курӑннӑ; вӗсене Турӑ патшалӑхӗ ҫинҫен кала-кала вӗрентнӗ. 40-мӗш кунӗнҫе Іисус Христос пӗлӗт ҫине кайнӑ. Вӑл Елеон тӑвӗ ҫинҫен апостолсен куҫӗ умӗнҫех пӗлӗт ҫине ҫӗкленнӗ. Іисус Христос пӗлӗт ҫине ҫӗкленсен, апостолсен ҫунӗ пит хурланнӑ. Вӗсем ӗлӗк пӗр май Іисус Христос вӗрентнине итлесе ҫӳренӗ, виҫӗ ҫул ытла Вӑл мӗн тунине курса ҫӳренӗ; халӗ Іисус Христос пӗлӗт ҫине ҫӗкленсен, тӑлӑха йулнӑ пек хуйхӑрнӑ, ҫавӑнпа вӗсенӗн ҫунӗсем пит хурланнӑ. Анҫах Іисус Христос Хӑй пӗлӗт ҫине кайнӑ пулсан та, апостолсене тӑлӑха хӑварман. Вӑл апостолсене лӑплантарса каланӑ: Епӗ сирӗн ҫийе Хам Аттем пама пулнине йарӑп, есир ҫӳлтен хӑват илеҫҫенех Іерусалим хулинҫе тӑрӑр, тенӗ (Лук. 24, 49).—Іисус Христос пӗлӗт ҫине ҫӗкленсе кайнӑ ҫух апостолсем йулашки хут Іисус Христосран пил-халав (пиллӗх) илнӗ те, Іерусалим хулине таврӑннӑ. Вӗсем Іерусалимре пӗр ҫуртра пухӑнса ларнӑ; вӗсемпе пӗрле Турӑ Амӑшӗ те пулнӑ; Христоса ӗненекен ытти ҫынсем те пулнӑ; мӗн пурӗ 120 ҫын пулнӑ. Вӗсем пӗр май Турра кӗлтуса пурӑннӑ, Іисус Христос йама пулнӑ Святой Сывлӑша кӗтсе тӑнӑ. Ҫапла вӗсем тӑхӑр кун кӗтсе ирттернӗ. Вун-

нăмĕш кун іудейсен аслă праçникĕ, аллăмĕш кун праçникĕ, пулнă. Çав кун іудейсем çуллен пур те Іерусалим ђиркӳне Турра кĕл-тума пухăннă, килĕнђе хăйсен çурђĕсене йывăçсем лартса, курăксем пăрахса илемлĕлетнĕ. Ĕлĕк еврей халăхне Синай тăвĕ çинђе Туръ закон панă, çавна асăнса Еврейсем çав праçнике тунă. Çав кун еврейсем, епĕ сире паçăр каларăм-ха, пур те Іерусалим ђиркӳне кайнă, апостолсем вăл кун ђиркĕве кайман, хăйсем пурăнакан çуртрах ларнă. Вĕсем пĕр май Святой Сывлăша кĕтсе Турра кĕл-туса тăнă, Святой Сывлăш хăçан анассине апостолсем хăйсем пĕлмен. Çапла апостолсем пур те пĕр шухăш çинђе тăнă ђух, сасартăк пĕлĕт çинђен çил-тăвăл кĕрленĕ йевĕрлĕ сасă шавласа аннă та, вĕсем пухăннă çурта туллийех тулнă. Вара вĕсене уйрăм, уйрăм тăракан ђĕлхесем курăннă; вăл ђĕлхесем вут ђĕлхесем йевĕрлĕ пулнă; кашни çын çине пĕрер ђĕлхе аннă. Вĕсем пурте Святой Сывлăшпа хăватлăланнă, Святой Сывлăш калаçтарнипе тĕрлĕ ђĕлхепе калаçа пуçланă (Дѣян. 2, 2—4).

Апостолсем çине Святой Сывлăш аннă ђухне çӳлте пĕлĕт çинђе çил-тăвăл шавланă пек сасă илтĕннĕ. Çав сасă ытти çынсене те илтĕннĕ. Çав сасса илтсе, çынсем нумайĕшĕ апостолсем ларакан çурт патне пынă. Апостолсем çине Святой Сывлăш ансан, вĕсем тĕрлĕ ђĕлхепе калаçа пуçланă. Курма пынă çынсем апостолсене курсан, тĕлĕнсе кайнă. Вĕсем тĕрлĕ ђĕлхепе калаçнине илтсен пур халăхсем те тĕлĕне пуçланă. Вара çак калаçакансем (апостолсем) пур те Галилея çыннисемçке? йепле халĕ епир хамăр калаçакан ђĕлхепе калаçаççĕ вĕсем? тесе тĕлĕнсе тăнă. Çавăнтах хăшĕ тата апостолсенђен мăшкăласа кулнă: ерех ĕçсе ӳсĕрĕлнĕ вĕсем, тенĕ. Вара Петр апостол вĕ-

сен умне тухнă та, вĕсене каланă: „ей Израил çыннисем! сирĕн хушшăрта тĕрлĕ хăватсем тăвакан Іисус Христоса пĕлетĕр есир, есир Ăна пăталаса вĕлертĕр, Вăл вилĕмрен ђĕрĕлсе тăђĕ, вилĕмĕн Ăна тытса ђарма хăват çитеймерĕ; Іисус Христос вилĕмрен ђĕрĕлсе тăнине епир пурсăмăр та пĕлсе тăратпăр. Іисус Христос пĕлĕт çине çĕкленђĕ те, Атте Турăран пирĕн çийе Святой Сывлăша йађĕ, халĕ пире мĕн пулнине есир хăвăр курса тăратăр ĕнтĕ“, тенĕ. Петр апостол çапла каласан, итлесе тăракан çынсем апостолсене каланă: „мĕн тăвас еппин пирĕн?“ тенĕ. Петр апостол вĕсене каланă: „ӳкĕнĕр, çылăхăрсене каçармашкăн пурсăр та Іисус Христос йађĕпе тĕне кĕрĕр“, тенĕ (Дѣян. 2, 37—38). Çав кунах вара Христоса ĕненсе виçĕ пин çынна йахăн тĕне кĕнĕ. Çав ĕçе асăнса, апостолсем çине Святой Сывлăш аннине асăнса, епир пайан праçник тăватпăр.

Апостолсем Святой Сывлăша илиђђен пит хуйхăрса пурăннă; Святой Сывлăш вĕсем çине ансанах, вĕсен ђунĕ савăнса кайнă; хăйсем вĕсем пĕтĕмпех улăшăнса кайнă. Вĕсем ĕлĕк пĕр еврей ђĕлхипе анђах калаçма пĕлнĕ, халĕ, вĕсем çине Святой Сывлăш ансанах, вĕсем тĕрлĕ ђĕлхепе калаçа пуçланă. Апостолсем ĕлĕк Христос мĕн вĕрентнине пурне те ăнланайман, халĕ, вĕсем çине Святой Сывлăш ансанах, вĕсем пурне те пĕлекен пулнă, вĕсем пит ăслăланса кайнă. Апостолсене мĕн кирлĕ пулнă, Святой Сывлăш çавна панă вĕсене. Апостолсене Іисус Христос пĕтĕм тĕнђери халăхсене кайса вĕрентме хушнă. Тĕнђери халăхсене пурне те вĕрентес тесен, вĕсен тĕрлĕ ђĕлхепе калаçма пĕлни кирлĕ пулнă: Святой Сывлăш вĕсем çине ансанах, вĕсенĕн ђĕлхи уçăлса кайнă, вĕсем тĕрлĕ ђĕлхепе калаçа пуçланă. Тата Святой Сывлăш апостолсене Іисус Христос çинђен, Іисус Христос мĕн туни çинђен, мĕн вĕрентни çинђен пурне те аса илтерсе тăнă.

Святой Сывлăш тивлетне илме апостолсем анђах мар, Христоса ĕненекен çынсем пур те тивĕçлĕ. Святой Сывлăш апостолсене мĕн кирлĕ пулнă, çавна панă, вĕсене тĕрлĕ ђĕлхе панă; Святой Сывлăш кирек хăçан та, кама мĕн кирлĕ, çавна парать. Ей ырă çынсем! пирĕн ăша Святой Сывлăш килсе вырăнаçтăр тесен, мĕн тăвас пирĕн? Петр апостол іудей çыннисене мĕн каланă-ха: çылăхăрсенђен ўкĕнĕр, вара сире те Святой Сывлăш тивлеђĕ тивĕ, тенĕ. Турă умĕнђе çылăхсенђен ўкĕнес пулать: ей Турă, епир усал пурăннине каçарсам, тесе йăлăнас пулать Турра. Акă пĕтĕм халăхпа ђĕр-куççи çине тăрса Турра кĕл-тăваççĕ: Святой Сывлăш хăватне антарса пар пире, тесе Турра йăлăнаççĕ. Çавăн ђухне есир те ђунтан тархасласа йăлăнăр Святой Сывлăш Турра: ей Святой Сывлăш! пирĕн ăша кĕрсе вырăнаç, пур усалтан тасат пире; иртнĕ пурăнăçра çылăха кĕнисене каçар, пурăнас пурăнăçа аван ирттерме пар, пирĕн ĕçе ăнтарса пыр, тийĕр. Амин.

Свящ. *П. Егоровъ.*